27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ДЕКАБРЬ 1 ЭРНЕКУН 235(1730) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне ТОЛБУХИНА

УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, наступлени пуçласа ярса, ДРАВА шывĕнчен çурçĕртерехре ДУНАЙ шывĕ урлă каçнă та тăшманăн ДУНАЙ шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи оборонине татнă. 40 километр таран шалалла кĕрсе кайнă, татса кĕнĕ вырăна 150 километр таран сарнă.

Наступлени туса пырса, фронт çарĕсем Венгри çĕрĕнче ПЕЧ, БАТАЖЕК, МОХАЧ хулисемпе çулсен пысăк узелĕсене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 330 пункта ытла йышăннă.

ДУНАЙ шывĕ урлă каçассишĕн тата тăшман оборонине татассишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: ШАРОХИН генерал-лейтенантăн, АКИМЕНКО генерал-майорăн, КРАВЦОВ генерал-майорăн, БЛАГОДАТОВ генерал-майорăн, югославсен КОСТА НАДЖ генерал-лейтенант ертсе пыракан корпусĕ, ПЕТРУШИН полковникăн, ДРЕЙЕР генерал-майорăн, ЛАЗАРЕВ генерал-майорăн, КОЗАК генерал-майорăн, МУХАМЕДЬЯРОВ полковникăн, КУЛИЖСКИЙ генерал-майорăн, СИДОРЕНКО полковникăн, СЫЧЕВ полковникăн, ЦВЕТКОВ генерал-майорăн, САВИЧ подполковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн НЕДЕЛИНАН, артиллери генерал-майорĕн БРЕЙДОН, ГЛУШКОВ полковникăн, ГЛАДКОВ полковникăн, ГОНЧАРОВ полковникăн, УСИК полковникăн, ШПЕК подполковникăн, РАХЛИН подполковникăн, СЕЛЕЗНЕВ майорăн, СНЫТИН подполковникăн, НИЗКОВ подполковникăн артиллерисчĕсем; ПШЕНЕЦКИЙ полковникăн, ЗАВЬЯЛОВ полковникăн, МУХИН подполковникăн, ДВОРКИН подполковникăн, КАТИЛОВ майорăн, ШЕВКИН подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн СУДЕЦАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ТОЛСТИКОВАН, авиаци генерал-майорĕн БЕЛИЦКИН, СМИРНОВ полковникăн, ШАТИЛИН подполковникăн, авиаци генерал-майорĕн ТИЩЕНКАН, НЕДОСЕКИН полковникăн, ИВАНОВ полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-полковникĕн КОТЛЯРАН, НОМИНАС полковникăн, РЫБАЛЬСКИЙ подполковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЕВАН тата СТАРОЛЕТОВ полковникăн связисчĕсем.

Тунă çĕнтерĕве ялавлăха палăртса хăварас тесе, ДУНАЙ шывĕ урлă каçассишĕн тата тăшман оборонине татассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ДУНАЙСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, ноябрĕн 29-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, УКРАИНАРИ 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, вăл шутра югославсен КОСТА НАДЖ генерал-лейтенант ертсе пыракан корпусне, ДУНАЙ шывĕ урлă каçса тăшман оборонине татнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ДУНАЙ шывĕ урлă каçассишĕн тата тăшман оборонине татассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

УКРАИНĂРИ 2-мĕш ФРОНТ ÇАРĔСЕН КОМАНДУЮЩИНЕ Совет Союзĕн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ ФРОНТ ШТАБĔН НАЧАЛЬНИКНЕ Генерал-полковника ЗАХАРОВА

УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, паян, ноябрĕн 30-мĕшĕнче, Венгрин округ центрĕсене— ЭГЕР тата СИКСО хулисене—çулйĕрсен пысăк узелĕсене тата тăшман оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене туртса илнĕ.

ЭГЕР тата СИКСО хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: ЖМАЧЕНКО генерал-лейтенантăн, ТРОФИМЕНКО генерал-полковникăн, МАНАГАРОВ генерал-лейтенантăн, ОСТАШЕНКО генерал-майорăн, МЕРКУЛОВ генерал-майорăн, УМАНСКИЙ генерал-майорăн, ОГОРОДОВ генерал-майорăн, КОНЕВ генерал-майорăн, ЕСИН генерал-майорăн, ТИМОШКОВ генерал-майорăн, БОЧКОВ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн ЗЫКОВАН, артиллери генерал-майорĕн КОРЕЦКИЙĔН, САГАЧ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-полковникĕн КУРКИНАН танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ГОРЮНОВАН летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн ПЕТРОВАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ТУПИЧЕВĂН саперĕсем; ГОРЕЛКИН полковникăн, МАКАРЕНКО полковникăн, Государство Хăрушсăрлăх полковникĕн КАРПОВАН связисчĕсем.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ЭГЕР тата СИКСО хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, ноябрĕн 30-мĕшĕнче, 21 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, УКРАИНАРИ 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ЭГЕР тата СИКСО хулисене тытса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ЭГЕР тата СИКСО хулисене туртса илессишĕн çапăçнă çĕрте пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăсса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 28-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 28-мĕшĕнче Чехословаки çĕ рĕнче пирĕн çарсем халăх пурăнакан 60 пункта ытла тытса илнĕ, çав шутра—СВИДНИЧКА, ВЫШНИЙ СВИДНИК, СТРОЧИН, СТРОПКОВ, БРУСНИЦА, ПЕТРОВЦЕ, КОШАРЕВЦЕ, ЖАЛОБИН, СТРАЖСКЕ, БАНОВЦЕ, ЛОЖИН, МАЛЧИЦЕ, СОМОТОР, СТРЕДА-НА БОДРОГЕ, МАЛЫЙ КЕВЕЖД, ВЕЛИКИЙ КЕВЕЖД ятлă пысăк ялсем тата СТРАЖЕСКЕ, БАНОВЦЕ, СОМОТОР ятлă чугун çул станцийĕсем.

Венгрире, НЬИРЕДЬХАЗА хулинчен çурçĕртерехре, пирĕн çарсем ТИСА шывĕ урлă каçнă та, тăшманпа çапăçса, ЗЕМПЛЕНАГАРД, ОРХЕДЬ, ДАМОЦ, ЛАЦА, КИШ РОЗВАДЬ, НАДЬ РОЗВАДЬ, РИЧЕ, ЦИГАНД, ПАЦИН, ЛУКА, КАРАДВИШ, ЗАЛКОД, КЕНИЕЗЛЕ ятлă пысăк ялсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Ноябрĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 32 танкне çĕмĕрсе тăкнă.

НОЯБРĔН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, наступлени пуçласа ярса, ДРАВА шывĕнчен çурçĕртерехре ДУНАЙ шывĕ урлă каçнă та тăшманăн ДУНАЙ шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи оборонине татнă, 40 километр таран шалалла кĕрсе кайнă, татса кĕнĕ вырăна 150 километр таран сарнă.

Наступлени туса пырса, фронт çарĕсем Венгри çĕрĕнче ПЕЧ, БАТАЖЕК, МОХАЧ хулисемпе çулсен пысăк узелĕсене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 330 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — БАТА, ШОМБЕРЕК, ЛАНЬЧОК, ДУБОШЕВИЦА, БАТИНА, ЗМАЕВАЦ, КНЯЖЕВИВИНОГРАДИ, ЛУГ, ДАРДА, МОРАДЬ, ВЕМЕНД, ХЕМЕШХАЗА, ЛИПТОД, НЕМЕТ-БОЛЬ, ХЕРЦЕГ ТЕТЕШ, БЕЛЕ-МАНАСТИР, ЯГОДНЯК, АЛЬШО-НАНА, ФЕКЕД, АЛАТ-ВАРАШД, КАТОЙ, ПЕЧ-УДВАРД, ВИЛАНЬ, ХАРШАНЬ, БЕРИМЕНД, БОЛМАН ятлă пысăк ялсем тата МОРАДЬ, БАТА, ПАЛОТА-БОЖОК, ФЕКЕД, НЕМЕТ-БОЛЬ, ВИЛАНЬ, ХАРШАНЬ, БЕРЕМЕНД, ШИРИНЕ, БЕЛИМАНАСТИР, ЗМАЕВАЦ, БАТИНА, ЧЕМИНАЦ, ДАРДА чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Совет Союзĕн Маршалне К. К. Рокоссовские маршалсен паллине—„Маршал çăлтăрне“ пани

Ноябрĕн 29-мĕшĕнче Кремльте СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн Заместителĕ О. В. Куусинен юлташ Совет Союзĕн Маршалне Константин Константинович Рокоссовские маршалсен паллине—«Маршал çăлтăрне» панă.

Ана тата нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Верховный Главнокомандовани панă боевой заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата çавăн чухне хăюлăхпа геройлăх кăтартнăшăн Совет Союзĕн Геройĕ ятне пани çинчен калакан грамотăпа пĕрле Ленин орденĕ тата «Ылттăн çăлтăр» медалĕ панă тата Хĕрлĕ Çарта нумай çул хушши лайăх ĕçлесе пурăннăшăн Хĕрлĕ Ялав орденĕ панă.

* * *

О. В. Куусинен юлташ çавăн пекех тата Авиацин Главнăй Маршалне А. А. Новикова, Çыхăну Çарĕсен Маршалне И. Т. Пересыпкина тата Н. С. Шиманов генерал-полковника нумай çул хушши Хĕрлĕ Çарта лайăх ĕçлесе пурăннăшăн Хĕрлĕ Ялав орденĕсем панă.

ИРЕКЕ КАЛАРНА РАЙОНСЕНЧИ БИБЛИОТЕКАСЕМ 6 МИЛЛИОН КЕНЕКЕ ИЛНЕ

Украинăра, Белоруссире тата РСФСР-ăн ирĕке кăларнă районĕсенче 3.400 библиотека çĕнĕрен ĕçлеме пуçланă, çав шутра—2.000 яха библиотекисемпе шкул библиотекисем. Унта 6 миллион кĕнеке ытла янă. Вăл кĕнекесенчен пысăкрах пайне Мускавран, Ленинградран тата ытти хуласенчен янă. Çав хуласем вĕсем оккупаци вăхăтĕнче сиен курнă библиотекăсене пулăшас ĕçе организациленĕ. (ТАСС).

МУЗЫКА КУЛЬТУРИН УНИВЕРСИТЕЧĔ УÇАЛНА

Киевра Украинăн государство филармонийĕ çумĕнче музыка культурин университечĕ уçалнă.

Искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Ф. Е. Козицкий «Украинецсен халăх юррисем» ятлă темăпа пĕррремĕш лекци вуласа панă. (ТАСС).

Халăх трибунĕ

С. АВВАКУМОВ

ВКП(б) историйĕн Ленинградри институчĕн директорĕ

Вунă çул каярах, 1934 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнче, фашизмăн ирсĕр сутăнчăкĕ, тискеррĕн персе, вырăс халăхĕн аслă ывăлне — Ленинград большевикĕсен руководительне Сергей Миронович Кирова вĕлерчĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ хамăрăн партие, рабочи класпа мĕнпур ĕççыннисене ВКП(б) Центральный тата Ленинград Комитечĕсен секретарĕ, большевикла партин Политбюро членĕ С. М. Киров вилни çинчен хурланса пĕлтерчĕ. «Центральный Комитет çакна ĕненсе тăрать, — тенĕччĕ çав чĕнсе каланинче: — Киров юлташăн ячĕ, вăл пролетариллĕ революцишĕн, ССР Союзĕнче социализм тăвассишĕн хăрама пĕлмесĕр тата паттăррăн кĕрешнин тĕслĕхĕ миллионшар пролетарисемпе мĕнпур ĕççыннисене социализм çĕнтерсе чапа тухассишĕн, рабочи класăн мĕнпур тăшманĕсене пĕтĕмпех тăпăлтарса кăларса пĕтерессишĕн малалла кĕрешме хавхалантарса пырĕ».

Кирова пирĕн пĕтĕм парти, мĕнпур совет халăхĕ юратнă. Вăл вилни çинчен калакан хыпар пирĕн çĕршыва пĕтĕм чунчĕререн хурлантарчĕ. Ленинград ĕççыннийĕсем Киров тупăкĕ патне хăйсен юратнă руководителĕпе, тусĕпе, учителĕпе сывпуллашма вĕçĕ-хĕррисĕр нумайăн пырса тăчĕç. Киров ӳтне столицăна илсе пырсан, мĕнпур Мускав ĕççыннийĕсем те ун тупăкĕ патĕнчен вĕçĕ-хĕррисĕр юхăмпа иртсе пычĕç.

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем нумай хуласемпе площадьсене, урамсемпе заводсене, колхозсемпе культура çурчĕсене Киров ятне пачĕç. Халăх Киров çинчен халапсемпе юрăсем хыврĕ. Поэтсем ăна хăйсен произведенийĕсенче мухтавласа юрларĕç. Скульпторсемпе живописецсем, аслă гражданинăн сăн сăпатне мрамăрпа гранитран, бронзăран касса кăларса тата нумай тĕрлĕ картинăсем ӳкерсе, ĕмĕрлĕхе палăртса хăварчĕç. Композиторсем Киров çинчен симфонисем çырчĕç.

Ленинпа Сталинăн шанчăклă ученикĕ тата соратникĕ—Киров большевиксен аслă партийĕн малти речĕсенче тăрса кĕрешсе пычĕ. Вăл хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе пурнăçне революци ĕçĕшĕн, рабочи класпа мĕнпур ĕççыннисен интересĕсемшĕн паттăррăн кĕрешнĕ çĕре пачĕ. Большевиксен хурçă отрячĕн чи лайăх представителĕ, патша саманинче вăрттăн ĕçленĕ чухне мĕнпур йывăрлăхсене тӳссе ирттернĕскер, баррикадăсем хушшинчи çапăçусен вут-çулăмĕпе тĕрмесем витĕр тухнăскер, вăл халăхсен ывăнми организаторĕ, çулăмлă пропагандист тата агитатор пулнă. Киров ӳссе çитĕнсе халăхăн чăн-чăн трибунĕ пулса тăчĕ. Вăл халăха çав тери вăйлăн хавхалантаратчĕ. Вăл Томскри тата Владикавказри рабочисене революциллĕ стачкăсемпе демонстрацисене, хĕçпăшаллă восстанисене ĕнкленĕ. Хăй нимĕнрен хăрамасăр хастаррăн кĕрешсе, вăл халăх ĕçĕшĕн мĕнле кĕрешмеллин тĕслĕхне кăтартса панă.

Тӳрĕ çултан нисталла пăркаланман çирĕп большевик Киров рабочи класăн революциллĕ ĕçĕнчи шалти тăшмансене — меньшевиксене, эсэрсене, анархистсене тата буржуаллă шухăшсем саракан ытти çынсене хирĕç хаяррăн кĕрешнĕ. Царизма сирпĕтсе антарнă хыççăн Сергей Миронович, Владикавказри рабочисен тата Терек облаçĕнчи ĕççыннисен пуçне тăрса, социализмлă революци тăвас тĕлĕшпе Ленин кăтартса панă çулйĕре пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешнĕ. Унăн кашни сăмахĕнче вăл ирĕклĕ те çĕнĕ Россия çĕнтерессине пĕтĕм чун-чĕререн ĕненни палăрса тăрать. Марксистла-ленинла теорипе хĕçпăшалланнă Киров нумай нациллĕ Çурçĕр Кавказри кăткăс лару-тăрура мĕнпур ĕçе питех те ăста организациленĕ, националистла контрреволюциллĕ элементсене хирĕç хастаррăн кĕрешнĕ.

Çурçĕр Кавказри ĕççыннисем ăна Петроградра, Советсен Пĕтĕм Российăри II-мĕш Съездне суйласа янă. Киров юлташ çапла Петроградра пулнă чухне Октябрьти революцие, Совет влаçĕ тăвас ĕçе активлăн хутшăннă. Вăл Кавказра совет влаçĕ тăрассишĕн вăя хĕрхенмесĕр пĕтĕм çулăмлă чĕрипе парса кĕрешнĕ.

Нимĕç захватчикĕсен кĕтĕвĕсем Российăна чуралантарма ун çĕрĕсем çине тапăнса кĕрсен, çулăмлă патриот Киров Германи империализмĕн ултавлă та сĕмсĕр ĕмĕчĕсене çурçĕр Кавказри халăхсем умĕнче хаяррăн тăрă шыв çине кăларса пынă. Нимĕç захватчикĕсен вăрă-хурахла ĕмĕчĕсене кăтартса парса, Киров Совет çĕршывĕнчи халăхсем пĕрлĕхлĕ пулни мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен тусем хушшинчи халăха ăнлантарса панă. Ĕççыннисен массисене социализмлă тăван çĕршыва хӳтĕлеме пĕтĕçтернĕ. Çурçĕр Кавказра Совет влаçĕ туса хурса ăна çирĕплетессишĕн пынă мĕнпур кĕрешӳ Киров юлташăн ячĕпе таччăн çыхăнса тăрать.

Партипе совет правительстви Сергей Мироновича Астрахане хӳтĕлеме хушнă. Вăл кунта белогвардеецсемпе интервентсене геройла хирĕç тăма мĕнпур ĕççыннисене мобилизацилене. Вăл революциллĕ дисциплинăна çирĕппĕн те çине тăрса тĕреклетсе пынă; Хĕрлĕ Çар чаçĕсен кĕрешӳри пултарулăхне ӳстерсе пынă. Астраханьти контрреволюциллĕ пăлхавçăсене хурçă алăпа çапа-çапа аркатнă. Астрахане геройла хӳтĕлес ĕçе ертсе пынă çĕрти хăйĕн мĕнпур ĕçĕпе Киров совет патриотизмĕн аслă та паха тĕслĕхне кăтартса панă. Сутăнчăк Троцкий Астраханьтен тухса кайма приказ парсан, Киров çав приказа хирĕç Ленин умĕнче протест панă, вăл çулпуçăн — «Астрахане вĕçне çитиччен хӳтĕлемелле!» тесе калакан директивине вăя хĕрхенмесĕр пурнăçа кĕртсе пынă. Аслă совет патриотĕ Киров паттăррăн çапла каланă: «Астрахань крайĕнче пĕр коммунист та пулин пур чухне, Атăл вăрри совет аллинче пулнă, совет аллинчех тăрать, малалла та совет аллинчех пулĕ», тенĕ.

Халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратнă, культура ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте те Киров граждан вăрçи вăхăтĕнчи пекех пĕтĕм вăя хурса, хавхаланса ĕçленĕ. Тăватă çул çурă хушши Азербайджанри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕн секретарĕ пулса ĕçлесе, Киров нефть промышленноçне юсаса ура çине тăратас тĕлĕшпе çав тери пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Вăл ертсе пынипе нефть кăларас ĕç техникинче чăн-чăн революци туса хунă, нефть кăлармалли çĕнĕ промыселсем тунă, кивĕ промыселсене çĕнетсе йĕркеленĕ.

Ĕççыннисен нушисемшĕн, нациллĕ культурăна аталантарассишĕн тата халăхсен туслăхне тĕреклетессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тимлĕн тăрăшса ĕçленине пула, Баку рабочийĕсен юратакан руководительне Киров юлташа мĕнпур Азербайджан ĕççыннийĕсем юратнă. Ленинпа Сталинăн аслă ученикĕ тата соратникĕ Киров большевикла парти речĕсен пĕрлĕхне хастаррăн хӳтĕленĕ. Кавказра партие хирĕçле мĕнпур ушкăнсене хирĕç, пуринчен малтан троцкизма хирĕç, хаяррăн кĕрешнĕ. Вăл Кавказ леш енче ленинла-сталинла наци политикине çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пынă, мĕнпур йышши национал-уклонистсемпе пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешнĕ.

Партишĕн чи çивчĕ самант килсе тухнă вăхăтра, парти тăшманĕсем, зиновьевецсем, Ленинградри парти организацине партин генеральнăй линине хирĕç тăратма хăтлансан, Киров юлташа, партин XIV-мĕш съезчĕн делегачĕсен ушкăнĕпе пĕрле, Ленинграда яраççĕ. Вăл унта Ленинградри парторганизаци членĕсене XIV-мĕш съездра Ленинград делегачĕсем, хăйсен съезда пымалли мандачĕсене ултавлă майсемпе илнĕскерсем, йышăннă позици большевизма хирĕçле преступникла позици пулса тăни çинчен ăнлантарса панă. Ленинград большевикĕсен руководителĕ пулма уйăрса лартнă хыççăн Сергей Миронович зиновьевла оппозицие кĕске вăхăтрах партирен уйăрса пĕччен тăратса хăварать, Ленинградри парти организацийĕн речĕсене таччăн пĕтĕçтерсе çирĕплетет. Ленинград большевикĕсен пухăвĕсенче тухса каланă хăйĕн сăмахĕсенче Киров зиновьевецсен икĕпитлĕхне, вĕсен партие хирĕçле преступникла ĕçĕсене, вĕсен меньшевикла ăшчикĕсене, вĕсем пирĕн çĕршывра социализм тума май пуррине ĕненменнине тăрă шыв çине кăларать. Киров массăсене Ленинпа Сталинăн социализмлă индустри тумалли планне, çав план социализм тунă çĕрте, хамăрăн çĕршыва хуçалăх тĕлĕшпе никама пăхăнмалла мар тăвас тата Совет Союзĕн оборона хăватне тĕреклетес тĕлĕшпе мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине çав тери хавхаланулăн ăнлантарса панă.

Ленина хирĕçле ушкăнсен, пирĕн парти çапса аркатнăскерсен, мĕнпур юлашкийĕсем партие хирĕçле троцкистла-зиновьевла блока пĕрлешсен тата вĕсем большевикла партин пĕрлĕхне хавшатас шутпа раскольникла политика тытса пыма пуçласан, Киров троцкистла-зиновьевла сутăнчăксене хирĕç хаяррăн кĕрешме мĕнпур Ленинград организацине ура çине тăратнă.

Сергей Миронович социализмлă индустри тăвас ĕçе хăйĕн мĕнпур иксĕлми вăйне хунă. Вăл Ленинградри рабочисене хамăрăн çĕршыва индустриализацилес ĕçре Ленинград промышленноçĕ мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăма тивĕçли çинчен тăтăшах ăнлантарса панă. Ленинградри рабочисене социализм çĕнтерĕвĕшĕн аслă ĕçсем тума хавхалантарнă.

С. М. Киров ертсе пынипе кивĕ заводсем çĕнĕ техника никĕсĕ çинче чи кĕске вăхăтра çĕнелсе йĕркеленчĕç, çĕнĕ цехсем, Ленинград индустрийĕн çĕнĕ гиганчĕсем ӳссе çитĕнчĕç. Электростанцисем пĕрин хыççăн тепри строя кĕрсе пычĕç. Вăл ертсе пынипе Ленинградра промышленноçăн çĕнĕ отраслĕсене çав тери нумай тунă: тракторсем, пăспа тата шывпа ĕçлекен хăватлă турбинăсем, гидрогенераторсем, дизельсем, электричество вăйне виçмелли приборсем, автомат-телефонсем, трансляци установкисем туса кăларассине организациленĕ; алюмини, синтетически каучук, пир-авăр тĕртмелли искусственнăй çип, хăватлăран та хăватлă кабельсем, блюмингсем тата ытти нумай тĕрлĕ япаласем туса кăларассине йĕркеленĕ.

Киров çав тери аслă строительство ĕçне куллен ертсе пынă, производствăн питех те кирлĕ ыйтăвĕсене татса парас ĕçе наукăпа тĕпчев институчĕсене явăçтарнă. Вăл рабочисен производствăри ăсталăхне ӳстерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнă, аслă шкулсемпе техникумсен ĕçне куллен сăнаса тăнă. Ленинграда кадрсен вучахĕ туса хунă. Пĕлӳлĕхпе тата опытпа, Ленинградăн чаплă традицийĕсемпе тата Кировăн тĕлĕнмелле вăй-хăвачĕпе хĕçпăшалланнă çынсем Ленинградран Магнитогорска, Кузбаса, Урала, Инçет-Хĕвелтухăçне кайнă.

Индустриализаци хамăрăн çĕршывăн оборона хăватне ӳстерес ĕçре мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен Киров халăха çине тăрса ăнлантарса панă. Халĕ, Отечественнăй вăрçă кунĕсенче, совет халăхĕ хамăрăн Тăван çĕршывăн индустриализаци политики çав тери аслă вырăн йышăнса тăнине уйрăмах лайăх ăнланса илчĕ. Индустриализаци политики ССР Союзне хăватлă крепость туса хума май пачĕ, çав крепость çине пырса çапăнса тăшмансен мĕнпур сĕмсĕр ĕмĕчĕсем арканса кайрĕç.

Киров ертсе пынипе Ленинград облаçĕнчи ялхуçалăхне ăнăçлăн коллективизацилене кăна мар, çавăн пекех тата пĕтĕм çĕршыва та коллективизаци ĕçĕнче пысăк пулăшу панă. Ленинград тăван çĕршыва тракторсем пачĕ, вăл ялта ĕçлеме колхоз стройĕн пиншер организаторĕсене ячĕ.

Ленинград большевикĕсен руководителĕ пĕтĕм Совет Союзĕн оборона хăватне, уйрăмах Ленинграда тĕреклетесси çине питĕ тимлĕн çавăрăнса пăхнă. Империалистла агрессорсем пирĕн тăван çĕршыв çине тапăнса кĕрес хăрушлăх пурри çинчен

(Юлашки 2-мĕш страницăра)

Халăх трибунĕ

(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

Ленинград çыннисене тĕтĕшах чса интерсе. Киров социализм çĕршывĕн крепоçĕ — Ленинград уйрăмах пысăк вырăнта тăнине палăртнă. Вăл Ленинградри парти организацине оборона ыйтăвĕсем çине çав тери тимлĕн çавăрăнса пăхма хушса пынă. Гитлерăн ушкăнĕ Германире власа хăй аллине тытса илнĕ хыççăн Киров тулашран тапăнас хăрушлăх çинчен ытларах та ытларах асăрхаттарма пуçланă. Германи фашисчĕсем Совет Союзĕ çине хĕçпăшалпа тапăнма уйрăмах çине тăрса хатĕрленнине Киров тÿррĕн кăтартса панă.

«Хăйсен пуçĕсене ытларах та ытларах çухатса пыракан авантюристсем, — тенĕ вăл, — ухмаха ернисене хупса усракан çуртран тарса тухнă çынсенни пек ăссăр плансемпе тата шухăшсемпе пурăнаççĕ. Çакă ĕнтĕ вăл пире татах та тимлĕнрех те çивĕчрех пулма, хамăр çĕршывăн оборонăна çар хăватне татах та ытларах тĕреклетме хушать. Мир политикине пурнăçа кĕртсе пырса, эпир ĕçсыннисен аслă çĕршывĕ тĕлĕшпе тĕрлĕ мыскарасем тума никама та ирĕк памăпăр». Гитлерла вăрă-хураксен тискер кайăкла сăн-питне кăтартса парса, Киров фашистсем наукăпа культурăран ирсĕррĕн мăшкăлланине пĕр хĕрхенмесĕр тăрă шыв çине кăларнă, наукăна хирĕç кĕрешессине тата вăтам ĕмĕрти тискерлĕхе хăйсен ялавĕ туса хунă фашистла мерзавецсене хаяррăн питленĕ.

Парти XVII-мĕш съездĕнче тухса каланă хăйĕн хавхаланулла сăмахĕнче Киров партин ленинла-сталинла линийĕ çĕнтерни çинчен, социализмлă тăван çĕршывăн ырă кун-çулĕшĕн малашне те пултаруллăн ĕçлеме кирли çинчен каланă. Троцкистла-бухаринла мерзавецсен çав тери тискер преступленийĕсем çинчен уичухпе пĕтĕмĕшпех [illegible]. Тав. Сергей Миронович съездĕн трибуни çинчен парти тăшманĕсене — троцкистла-бухаринла ултавçăсене [illegible] çак ирсĕрсен [illegible] заявленисене ĕненмелле мар тесе чĕнчĕ. [illegible]

«Сергей Миронович, — тенĕ Жданов юлташ, — парти [illegible] организацилеме çав тери ăста пĕлнĕ. Ăна тĕрĕссипех парти трибунĕ, пирĕн аслă халăхăн трибунĕ тесе [illegible]. [illegible]»

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче С. М. Кировăн [illegible] фашизма хирĕç [illegible] совет çыннисене [illegible] геройла ĕçсем тума хавхалантарать.

Ленин—Сталин ĕçĕшĕн шанчăклă пулса тăракан Ленинград ĕççыннийĕсем фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç пыракан хаяр кĕрешÿри аслă испытание чыслăн тÿссе ирттерчĕç, мĕнпур совет халăхĕ пулăшнипе, Ленинград хулине нимĕç захватчикĕсенчен геройла хÿтĕлесе хăварчĕç. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене аркатмаллах пыра-пыра çапрĕ. Совет çарĕсемпе пирĕн союзниксен çарĕсем пĕрле пыра-пыр'а çапнине пула, гитлерла Германи пуçĕпех пĕтсе ларасси патне, вилĕм шăтăкĕ патне пырса тăчĕ.

Совет халăхĕ татах мирлĕ те пултаруллă ĕç патне таврăнас кун çывăхра ĕнтĕ. Киров сăнарĕ, çак чаплă большевикăн хавхалантаруллă ĕçĕ совет çыннисене пирĕн тĕрĕс ĕç гатăклăн çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешÿре çĕнĕ паттăрла ĕçсем тума хастарлантарĕ. Пирĕн Сергей Миронович çав ĕçшĕн пурăннă, кĕрешнĕ. Унăн чаплă ячĕ ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнĕ.

Финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăх

Кварталти плана Конституци кунĕ тĕлне тултаратпăр

СОВЕТСКОЕ, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăха хутшăнса, районри нумай ялсоветсем укçа-тенкĕ пухас ĕçе чылай вăйлатрĕç. Турай, Асламас тата ытти хăшпĕр ялсоветсем кварталти плана çак кунсенчех пурнăçа кĕртсе çитереççĕ.

Кварталти плана пĕтĕмпех тултарса çитерме районăн тата 300 пин тенкĕ укçа пухмалла. Район Совечĕн сессийĕ çав укçана Конституци кунĕ тĕлне пухса çитерме йышăнчĕ. Халĕ районри партипе совет активĕ ялсоветсемпе колхозсенче ĕçлет. Вĕсем массăллă-ăнлантарулла ĕç туса пыраççĕ, финанс работникĕсене ĕçре пулăшу параççĕ.

П. НИКИТИН.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Страховка укçине пухса çитернĕ

КУКЕÇ, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Чылай ялсоветсем, финанс планне тултармалли уйăхлăха хутшăнса, укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Альгеш, Çĕньял Уйкас, Ильпеш ялсовечĕсем ялхуçалăх налогĕпе страховка укçине пĕтĕмпех пухса çитернĕ.

Çав вăхăтрах Шуркасси, Лапсар, Чăкăр, Поляново тата ытти хăшпĕр ялсоветсем страховка укçине питех те сÿрĕккĕн пухаççĕ. Вĕсем пĕтĕм районă каялла туртса пыраççĕ.

Районри финанс работникĕсен юлса пыракан ялсоветсене пулăшас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла. Ĕçсыннисем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне лайăх йĕркелесен, район финанс планне вăхăтра пурнăçа кĕртме пултарать.

Г. ПЕТРОВ.

Вăрман стахановецĕсен канашлăвĕ

БУИНСК. Кунта ноябрь уйăхĕн вĕçĕнче вăрманпромхозри стахановецсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта стахановецсем ĕç итогĕсемпе умра тăракан задачăсем çинчен вăрманпромхоз директорĕн Васильев юлташăн докладне сÿтсе яврĕç.

Вăрман хатĕрлесе турттармалли плана тултарас тĕлĕшпе вăрманпромхозра Кармал вăрманпункчĕн коллективĕ малта пырать. Вăл Октябрь уйăхĕнчи плана хатĕрлес енĕпе 175 процент, турттарас енĕпе 140 процент тултарнă. Ноябрь уйăхĕнчи плана та 20 кун хушшинчех пурнăçа кĕртсе çитернĕ. Çак çитĕнĕве стахановла ĕçленипе тума пултарнă. Тăвай районĕнчен пынă Николай Тарасов, лучковăй пăчкăпа ĕçлесе, нормăна кулленех 700 процент ытла тултарать. Пĕр кунхине вăл 14 норма тунă. Вăрман касакан И. Смирнов юлташ пĕр кунта 8 нормăран кая туман. Вăрман турттаракансем хушшинче те стахановла ĕçлекенсем сахал мар.

Вăрманпромхозра Куславкка районĕнчи колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. Вăл районри 6 колхоз хăйсен планне тултарса çитерсе ĕнтĕ, халĕ вĕсем планран ирттерсе вутă хатĕрлеççĕ. Нумай пулмасть, Куславкка районĕнчен килнĕ колхозниксем çулталăкри плана срокчен тултарассишĕн Октябрьски районри колхозниксемпе социализмлă ăмăртăва тухрĕç.

Канашлу, стахановецсем сĕннипе, Йĕпреç вăрманпромхозĕпе социализмлă ăмăртăва тухма йышăнчĕ.

П. КУРАКОВ.

Çулталăкри плана срокчен тултарассишĕн

ЙĔПРЕÇ. Предприятисемпе артельсен коллективĕсем, Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революцин 27 çул тултарни тĕлĕшпе тунă доклада вĕренсе май, çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ. «Красный строитель» артельти атă-пушмак тăвакан цехра ĕçлекенсем çулталăкри плана 150 процент тултарнă. «Помощь» артель çулталăк планне Конституци кунĕ тĕлне пурнăçа кĕртме хатĕрленет. Вĕсем хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. «Красный строитель» артель 1944 çулхи плана ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарнă. «Помощь» артель те плана ирттерсе тултаракансен йышне пысăк.

(Хамăр информ.)

Выльăхсене ăшă витере усрамалла

МУРКАШ. Шурча ялсоветне кĕрекен «Самолет» колхозра çак вăхăта çитсе те ферма çуртсене юсаман. Пур тĕлте те шăтăксем нумай пирки витене [illegible]. Шăтăксенчен çил вĕрсе тăнине пула выльăхсем [illegible] чĕтресе тăраççĕ. Лаша витин алăкĕсем çук.

Выльăхсене çитермелли апатăн балансне туман. Выльăх апатне ферма заведующийĕ Г. Петров аллине актпа паман. Улăмсем ăçта çапнă, çавăнтах сапаланса выртаççĕ.

Конюхсен çуртне юсаман, кăмаки ишĕлсе пĕтнĕ пирки вут хутса ăшăтма çук. Çавна пула конюхсем каçхине лашасене апат параççĕ те ирхинеччен пырса пăхмаççĕ. Лашасен вити патĕнче хурал та çук. Лашасене кам кÿлсе каяс тет, вăл никамран та ыйтмасть.

Çак йĕркесĕрлĕхсем çинчен районри çĕрĕç пайĕн работникĕсем те пĕлеççĕ, анчах нимĕн те тумаççĕ.

А. СМИРНОВ.

* * *

СЕНТЕР. Юнгăри Войков ячĕпе тăракан колхозра ферма хĕллене пур енчен те хатĕрленсе кĕтсе илчĕ. Ферма работникĕсен вăйĕпе выльăхсен пур витисене те витрĕç. Витесем йĕри-тавра канавсем алтса тухнă.

[illegible] колхозра выльăхсене хĕл каçарма çителĕклĕ апат хатĕрленĕ. 50 тонна силос хывса хăварнă. Выльăх апатне ферма заведующийĕ аллине панă.

П. ФРОЛОВ.

* * *

[illegible] «Самолет» колхоз выльăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленчĕ. [illegible] ла мар туна.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне колхоз пур выльăхсем енĕпе те тултарнă. Выльăхсем валли апат та çителĕклĕ хатĕрленĕ тата вăл апата ферма заведующийĕ аллине панă.

Н. АМУРЦЕВ.

* * *

ОКТЯБРЬСКОЕ. Ильменкассинчи «Молния» колхоз выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма çителĕклĕ апат хатĕрленĕ. Çакăнпа пĕрлех колхозра выльăхсем валли ăшă витесем хатĕрлеме тăрăшрĕç. Выльăх витисене ăшă каймалла мар туса юсаса лартнă. Ку ĕçре старши конюх А. Афанасьев тата ферма заведующийĕ А. Борисова юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

И. АНДРЕЕВ.

Совет профсоюзĕсен делегацийĕ Италирен таврăнни

Ноябрĕн 27-мĕшĕнче Пĕтĕм Союзри профессиллĕ союзсен Центральнăй Совечĕн делегацийĕ Италирен Мускава таврăннă. Делегацире çаксем пулнă: ВЦСПС секретарĕ М. П. Тарасов (делегаци руководителĕ), станоксемпе инструментсен промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕн председателĕ В. Д. Аксенов, Украинăпа Молдави ССР-ĕсенчи совхозсен рабочийĕсен профсоюзĕн Организациллĕ бюровĕн председателĕ П. В. Суплецов тата Д. П. Шевлягин (делегаци секретарĕ).

Делегаци Италие Италири ĕç конфедерацийĕ чĕннипе кайнă. Октябрĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа ноябрĕн 14-мĕшĕччен вăл Италин ирĕке кăларнă пайĕнчи индустрипе ялхуçалăх центрĕсене кайса курнă. Совет профсоюзĕсен делегацийĕ пур çĕрте те Италири ĕççыннисем питĕ савăнса кĕтсе илнĕ, вĕсем хăйсем совет халăхне, Хĕрлĕ Çара тата Сталин юлташа хĕрÿллĕн юратнине палăртнă.

Делегаци 76 митингра тата профсоюзсен активĕн 22 пухăвĕнче сăмах тухса каланă. Çав митингсемпе пухусенче 250 пин çын ытла пулнă. Италири профсоюзсен руководителĕсем тата ĕççыннисем пур çĕрте те делегацирен хăйсен ячĕпе совет профсоюзĕсене, совет халăхне, паттăр Хĕрлĕ Çара, унăн полководецне тата Верховнăй Главнокомандующине Сталин юлташа тăвакла хĕрÿллĕ салам калама ыйтнă.

(ТАСС).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Германире союзниксен çарĕсем ноябрĕн 27-мĕшĕнче Юлих-Кюртген секторĕнче майĕпен малалла куçса пынă. Кослар хулинче çапла кашни çуртшăнах çапăçнă. Унтан пăртак кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Альтдорф хули патне çывхарнă. Союзниксен çарĕсем Лангерзей хулипе юнашар ларакан ялсене çитнĕ, çав хула çывăхĕнчи çÿллĕ вырăнтан тăшмана хăваласа кăларнă.

Францире союзниксен çарĕсем Мец хулинчен хĕвелтухăçнерехре темиçе миля малалла кайнă. Союзниксен чаçĕсем Тетерхен патне çитнĕ (Тетерхен вăл Мец хулинчен 20 миля çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре ларать). Сент-Аво ятлă пункта кĕрсе кайнă тата çав районри пысăках мар темиçе яла йышăннă.

Саарбург хулинчен çурçĕртерехре союзниксем Хункирх тата Волфскирхен хулисене [illegible] Дурстель хули патне çитнĕ.

Страсбург хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем [illegible] тата Эльзас тÿремĕнчи Мольсгейм урлă хĕвеланăç енелле наступлени туса пынă.

Вогез тăвĕсем çинче союзниксем, тăшман кăшт хирĕç тăнине çĕмĕрсе, çĕнĕ çитĕнÿсем тунă. Союзниксен çарĕсем Бельфор хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре [illegible]

Рона—Рейн каналĕнчен кăнтăртарахра [illegible]

Ноябрĕн 27-мĕшĕнче [illegible] бомбардировщиксем [illegible] Фрейбург тата Нейсс ятлă [illegible]

ЛОНДОН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible] 8-мĕш армин [illegible] чен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра хăйсен Ламоне шывĕ хĕрринчи позицийĕсене аслăлатнă. 5-мĕш армири Англипе Инди чаçĕсем Модильяно хулинчен çурçĕртерехре тусем çинчи темиçе рубежа тытса илнĕ. Тăшман Ламоне шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре тата Фаэнца хулинчен кăнтăртарахра хирĕç тăма пăрахнă. Фронтăн ытти участокĕсенче патрульсем активлăн кĕрешнĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Венло хулинчен çурçĕртерехре (Голландире) союзниксен çарĕсем тăшманăн Маас шывĕнчен хĕвеланăçнерехри юлашки йышлă мар опорнăй пунктĕсене хирĕç çапăçаççĕ.

Юлих хулинчен кăнтăртарахра союзниксем пĕр çÿллĕ вырăна йышăннă та Бармен ялне атакăланă. Кослар хулинче халĕ те çапăçаççĕ. Тăшмана Мерценгаузен тата Кирхберг хулисенчен хăваласа кăларнă. Унтан кăшт кăнтăртарахра союзниксен чаçĕсем Германин пилĕк хулинче — Инден, Лангервей, Юнгерсдорф, Юртген тата Ламмерсдорф хулисенче çапăçаççĕ. Союзниксен çарĕсем Саар улăхĕнче хăйсен ĕçĕсене аслăлатнă, темиçе хула тытса илнĕ. Союзниксем Виллинген хули патне тата Саарлаутертан кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ларакан Берус хули патне çитнĕ.

Сент-Аво районĕнче (Эльзасра) ăнăçусем тунă, унтан союзниксем Обергомбург урлă тухса кайнă. Бронетанковăй чаçсем Фаль-Эберсинг тата Дифенсах хулисем патне çитнĕ. Союзниксен пехоти Гинсинген хули патнелле малалла кайнă. Унтан кăшт кăнтăртарахра союзниксен бронетанковăй чаçĕсем Вольфскирхен хулине тăшмантан пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех тасатса çитернĕ. Союзниксен ытти чаçĕсем Бурбахра тата Бергра тăраççĕ.

Çурçĕр Эльзас тÿремĕнче союзниксен çарĕсем Хагенау хулинчен 3 мильăра тăраççĕ. Союзниксен ытти чаçĕсем Мольсгейм хулинчен кăнтăртарахра Вогез тăвĕсем урлă касса çитнĕ. Бельфор прохочĕ районĕнче союзниксен çарĕсем Доллерн шывĕнчен 8 миля кăнтăралла куçнă хыççăн пĕр-перипе пĕрлешнĕ те Бельфорпа Мюлуз хушшинче тăшманăн нумай мала тухса тăнă позицийĕсене татса илнĕ.

Ноябрĕн 20-мĕшĕнче каçхине çăмăл бомбардировщиксем промышленность центрĕ пулса тăракан Нюрнберг хули çине бомбăсем пăрахнă».

ЛОНДОН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 29-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: 8-мĕш арми чаçĕсем Ламоне шывĕпе Монтоне шывĕ хушшинче çурçĕр енне куçса пынă. Альберето районĕнче вĕсене тăшман вăйлă хирĕç тăнă. 5-мĕш армири Англипе Инди чаçĕсем Модильянăран хĕвеланăçнерехре туллă-сăртлă вырăнта малалла кайнă. 5-мĕш армири Америка чаçĕсем тăшманăн икĕ вăйлă контратакине сирсе янă. Фронтăн ытти участокĕсенче патрульсем активлăн кĕрешнĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: ноябрĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин йышлă бомбардировщикĕсем Германие тапăннă. Пуринчен ытла Эссен тата Нейс хулисене вăйлă тапăннă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ТОКИО ХУЛИНЕ ÇĔНЕРЕН ТАПАННИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар министерстви çапла пĕлтернĕ: «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщиксем ноябрĕн 27-мĕшĕнче кăнтăрла Токио хулине тапăннă, хулари стратегиллĕ объектсемпе промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Çав самолетсем вĕсем Сайпан утравĕ çинчи базăсем çинчен вĕçсе хăпарнă.

Беженецсен ĕçĕсене пăхакан Америкăри Управлени нимĕçсем Польшăра тискер ĕçсем туни çинчен пĕлтерни

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Беженецсен ĕçĕсене пăхакан Вашингтонри управлени (унта Хэлл, Моргентау тата Стимсон тăраççĕ) нимĕçсем Кăнтăр-хĕвеланăç Польшăри Освенцимри тата Биркенаури вилĕм лагерĕсенче çынсене йышлăн вĕлерни çинчен тĕплĕн çырса пĕлтерни пичетлеме панă. Çав пĕлтерÿве лагерьсенчен тарнă çынсем каланă тăрăх çырнă, унта, паллах, вăл çынсен ячĕсене кăтартман.

Беженецсен ĕçĕсене пăхакан управлени çырнă умсатьяра çапла каланă: нимĕçсем, пĕтĕм тĕнчери халăхсене пăхăнтарма хăтланса, Европăра темиçе миллион çынна вĕлернĕ. «Нимĕçсем тунă тискер ĕçсем калама çук тарăхтараççĕ, цивилизациллĕ çынсем çакна питĕ йывăр ĕненеççĕ. Анчах та США правительствин тата ытти çĕршывсен правительствисен аллинче малта кăтартнă фактсене çирĕплетсе паракан материалсем пур».

Освенцимра икĕ çул хушшинче 1.700 пин евреее газсемпе пăчăхтарса вĕлернĕ.

Биркенаура «больница» тенĕскер тунă. Унта тытса хупнă çынсенчен ĕçлеме пултарайманнисене е ытти сăлтавпа вĕлерме шутланисене пухнă. Лагерьти врач эрнере икĕ хутчен çынсене «уйăра-уйăра» илнĕ, вĕсене вара машинăсем çине лартса, вăрмана иле-иле кайнă; вăрманта вĕсене газпа пăчăхтарса вĕлернĕ. Кашни эрнерех 800 çынна яхăн «суйласа илнĕ», ытти майпа 1.200 çынна яхăн вилнĕ.

Хальхи вăхăтра Биркенаура 4 крематори пур, унта кăмакасем, газ камерисем тата пулăшуллă çуртсем пур. Кашни кун çав крематори 6.000 виле çунтарать. Майданекри пекех, Биркенаура та хупса усракан çынсен ушкăнĕсене сывлăш тухмалла мар тунă çурта хупаççĕ. Çавăн хыççăн мăччари шăтăк витĕр çав çурта газ яраççĕ. Унтан вилнĕ çынсен ÿчĕсене крематорие илсе каяççĕ те çунтараççĕ.

1943 çулхи мартра пĕрремĕш крематорие уçнă çĕрте Берлинран пынă паллă хăнасем пулнă. Çав крематорие уçнă чухнехи ĕçсен «программи» Краковри 8.000 еврее пăчăхтарса вĕлерессипе тата çунтарса ярасси пулнă. Çав «программăна» пурнăçланин результачĕсем хăнасене — çар çыннисене те, çарта тăманнисене те — питĕ кăмăлла кайнă, вĕсем газ камеринче мĕн пулнине шăтăксем витĕр пăхса тăнă. Çĕнĕрен тунă крематорие вĕсем вара питĕ мухтанă.

ЛЮБЛИНРИ СУД МАЙДАНЕКРИ ПУÇКАСАКАНСЕН ĔÇНЕ ПАХМА ПУÇЛАНА

ЛЮБЛИН, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Люблинри «Салтак çуртĕнче» суд 6 гитлеровецăн ĕçне пăхма пуçланă. Çав гитлеровецсем Майданекра хупса усранă çынсене тискеррĕн асаплантарнăшăн тата вĕлернĕшĕн айăплă пулса тăраççĕ. Суд пыракан залра, 1.500 çын ытла вырнаçаканскерте, халăх туп-тулли. Зала кĕрейменнисем тулта çав çурт патĕнче тата айăпланакан гитлеровецсене суда илсе пыракан урамсенче тăраççĕ. Çын вĕлерекенсене çиллесе кăшкăрнă сасăсем илтĕнеççĕ.

Айăпланаканнисен сакки çинче çаксем лараççĕ: Антон Тернес—эсэсовецсен çарĕсен обершарфюрерĕ, Герман Фогель—эсэсовецсен çарĕсен штандартенфюрерĕ, Тео Шолен—эсэсовецсен çарĕсен ротенфюрерĕ, Вильгельм Герстенмайер — эсэсовецсен çарĕсен гауптмаршфюрерĕ, Эдмунд Польман тата Игейнд Отланд. Çак çынсем вĕсем Дахаури тата Ораниенбургри лагерьсенче «ĕçленĕ». Вĕсене хăйсен хăрушă преступленийĕсен йĕрĕсене пĕтернĕ вăхăтра арестленĕ.

Çак ĕçе Польшăн ятарласа тунă сучĕ пăхса тухать. Суд председателĕ Зембужский, членĕсем — Надульская тата Дымовский, прокурорсем — Чеслюк тата Савицкий тата 5 адвокат.

Суд залĕнче совет, Америка тата Англи хаçачĕсен, çавăн пекех тата демократиллĕ Польша хаçачĕсен корреспонденчĕсем лараççĕ.

Çак ĕçпе халăх калама çук интересленнĕ пирки Люблинри кинотеатрсенче поляк кинооператорĕсем Майданекра ÿкерсе илнĕ документлă фильма кăтартаççĕ.

КВАПИНСКИЙ ПОЛЬШĂН ЭМИГРАЦИРИ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ТУМА ХАТЛАННИ ПĂЧЛАНСА ЛАРНА

ЛОНДОН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕ çапла пĕлтерет: Квапинский Польшăн эмиграцири çĕнĕ правительствине тума хăтланни пăчланса ларнă, вăл вара çĕнĕ правительство тăвас шухăша пăрахнă.

ИТАЛИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ПИЧЕТ БЮРОВĔ ПĔЛТЕРНИ

РИМ, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Италири коммунистсен партийĕн пичет бюровĕ çапла пĕлтерет: «Правительство тăвас тĕлĕшпе юлашки кунсенче тухса тăнă йывăрлăхсене ăнлантарса парас шутпа пичетлесе кăларнă официальнăй отчетра çапла каланă: коммунистсен партийĕпе социалистсен партийĕ сулахай партисен политикине йышăнма хушнă пулать, либералсен партийĕ çакăнпа килĕшмен пулать. Хальхи лару-тăрушăн сулахай партисем ответлă пулса тăраççĕ тенине Италири коммунистсен партийĕн руководстви татăклăн сирсе ярать. Коммунистсен партийĕн политикине хаçатсенче пичетлесе кăларнă резолюцире лайăх кăтартса панă. Тĕрĕссипе илсен, премьер-министр Бономи коммунистсен партийĕн руководителĕсемпе калаçнă чухне вăл коммунистсен партийĕ йышăнма пултарайман условисем кăларса тăратнă, вăл хальхи правительствăн политикăллă линине улăштаракан условисем сĕннĕ, çав условисем, тĕрĕссипе каласан, коммунистсен партине правительство коалицийĕнчен тухма хушакан условисем пулнă. Уйрăм илсе каласан, çав условисем фашизма хирĕç ĕçлекен верховнăй комиссариата хупма хушнă. Италири коммунистсен партийĕн руководстви, правительство кризисĕн сăлтавĕсем çинчен халăха лайăхрах ăнлантарса парас тесе, Бономи премьер-министр патне Тольятти янă çырăва çеç пичетлесе кăларать, çав çырура правительствăпа коммунистсен партийĕн позицийĕсене йышлă документсемпе кăтартса панă».

БОНОМИЕ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУМА ХУШНА

РИМ, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Итали правительствин представителĕ паян çапла пĕлтернĕ: Умберто принц Иваноэ Бономие çĕнĕ правительство тума хушнă, тенĕ.

Ялхуçалăхне механизацилекенсене вĕрентсе хатĕрлесси

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ялхуçалăхне механизацилекенсен çĕнĕ йышне вĕрентсе хатĕрлемелли çинчен постановлени йышăннă. 1944—45 çулта механизаци шкулĕсенче тата машинно-тракторнăй станцисемпе совхозсенчи курссенче 192.000 ытла тракторист, 34.000 ытла комбайнер, 46.000 комбайнер помощникĕ, трактор бригадисен 17.600 бригадирне, 8.000 ытла механик, 13.000 шофер, 27.000 ремонт рабочийĕсем вĕрентсе хатĕрлемелле. Çав ĕçсене вĕрентме механизаци шкулĕсене тата курссене 16 çултан кĕçĕн мар колхозниксемпе колхозницăсене, машинно-тракторнăй станцисемпе совхозсенче ĕçлекен работниксене, ялсенчи ытти çынсене те илеççĕ.

Кунсăр пуçне, МТС-семпе совхозсенчи икĕ уйăхлăх курссенче 150.000 тракториста ытла тата 25.000 комбайнера ытла тепĕр хут вĕрентмелле.

Трактор бригадисен бригадирĕсем ялхуçалăх ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, СССР Совнаркомĕ СССР Наркомземне, республикăсен совнаркомĕсене, крайсемпе облаçсенчи Советсен исполкомĕсене 1944 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1945 çулхи мартăн 1-мĕшĕччен ялхуçалăх институчĕсенче, техникумсенче тата ялхуçалăх механизаци шкулĕсенче трактористсемпе бригадирсен квалификацине хăпартмалли уйăх çурăлăх курссем уçма хушнă. Трактор бригадисен бригадирĕсене çуркунне (унтан кая мар) çав курссенче тепĕр хут вĕрентмелле.

Çав курссенче вĕрентме çĕрĕç органĕсен, шкулсен тата наукăпа тĕпчев учреждениĕсен чи пысăк квалификациллĕ работникĕсене тата машинно-тракторнăй станцисен директорĕсемпе механикĕсене чĕнеççĕ.

Пирĕн колхозăн выставки

Отечественнăй аслă вăрçă пирĕн «Дружба» колхоз умне те сахал мар йывăрлăхсем кăларса тăратрĕ. Анчах та çав йывăрлăхсем ялхуçалăх продукчĕсем туса кăларассине татах ÿстерме, пĕтĕм ĕçе вăрçă интересне пăхăнтарса туса пыма вĕрентрĕç. Çапла вара, малтан юлса пынă колхоз халĕ районра малта пыракан колхозсен ретне тăчĕ.

Тунă çитĕнÿсене палăртас тесе, эпир кăçал колхозра ятарласа ялхуçалăх выставки организацилерĕмĕр. «Гектартан 100 пăт тĕштырă туса илессишĕн кĕрешер», «Тырпулшăн кĕрешни — çĕнтерÿшĕн кĕрешни», — çак лозунгсемпе уçăлчĕ пирĕн колхоз клубĕнчи ялхуçалăх выставки. Выставкăра Сталин юлташăн пысăк портречĕ айĕнче колхоз фронта мĕнле пулăшни çинчен калакан диаграмма çакăнса тăрать. Колхоз çулсеренех çĕршыва нумай тырпул, аш-какай, промышленность валли чĕртавар парса тăрать. Вăрçăн виçĕ çулĕ хушшинче кăна государствăна 46 пин пăт ытла тырă панă. 327 центнер какай, 37.470 литр сĕт, 36.720 штука çăмарта, 522 килограмм çăм, 9.700 пăт пахча-çимĕç тата çĕрулми панă.

Украина колхозникĕсем чĕнсе каланине йышăнса илсе, пирĕн колхоз государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татрĕ. Планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 810 пăт тырă патăмăр. 1945 çулшăн аванс шучĕпе государствăна 350 центнер тырă, 60 центнер какай, 1.500 литр сĕт, 40 килограмм брынза панă.

Вăрçă çулĕсенче акăнакан çĕр лаптăкĕ 330 гектара çити ÿсрĕ. Пĕрчĕллĕ тырăсемпе техникăллă культурăсен тухăçлăхĕ икĕ хут ÿснĕ. Иртнĕ çуркунне 420 гектар ыраш, 150 гектар сĕлĕ калчисене тĕрлĕрен минераллă удобренисемпе апат паттăмăр. Çавна май колхоз вăтам шутпа гектартан 15,5 центнер тĕштырă туса илчĕ. Уйрăм участоксенче, пĕтĕмпе 180 гектар çинче, 21-шер центнер ыраш, 27-шер центнер сĕлĕ тухрĕ. Уйрăмах 6-мĕш бригадăн (бригадирĕ Анна Леонтьева) тырри ăнса пулчĕ. Вĕсем 146 гектар çинче 19,5-шер центнер тырă туса илнĕ. 1-мĕш бригадăра та (бригадирĕ А. Николаев) гектартан 21-шер центнер тырă тухнă. 6-мĕш бригадăри М. Андреева юлташ ертсе пыракан звено хăйне çирĕплетсе панă 13 гектар çинче гектартан 24-шер центнер ыраш, 27-шер центнер сĕлĕ, Агафи Леонтьева звени 25 гектар çинче гектартан 22,3-шер центнер ыраш туса илнĕ.

Çак ÿсĕмсене кăтартса патăмăр та ĕнтĕ эпир кăçалхи выставкăра.

Тырпул тухăçлăхĕ татах ÿстĕр тесе, эпир кăçал уя 9.000 лав тислĕк, 120 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 142 центнер кĕл, 660 центнер суперфосфат, 570 центнер сульфат, 450 центнер кали тăварĕ, 558 центнер фосфор çăнăхĕ тăкса çемçетрĕмĕр. Çакăн хыççăн пĕрчĕллĕ тырăсен тухăçлăхĕ палăрмаллах ÿсрĕ. 2-мĕш бригадăнах илер. Вĕсем удобренисем тăкнă участок çинче гектартан 23,5 центнер сĕлĕ, удобренисем тăкман участок çинче 9,2-шер центнер туса илнĕ.

Çаксемпе пĕрлех выставкăра ăнса пулнă пахча-çимĕçсем — купăста, сухан, кишĕр, çĕрулми т. ыт. те илемлĕн курăнса выртаççĕ. 1941 çулта пахча-çимĕç 1,2 гектар çинче çеç лартса тунă пулсан, кăçал унăн вырăнне 8,6 гектара çити ÿстертĕмĕр.

Çĕрĕн тухăçлăхĕ татах ÿссе пытăр тесен, нумай çул хушши ÿсекен курăксене акса, пусуçаврăнăшĕпе тĕрĕс усă курмалла. Çаванпа эпир нумай çул хушши ÿсекен курăксем акмалли çĕр лаптăкне ÿстертĕмĕр, акма вăрлăхсем те çителĕклех. 1945 çулта курăксем акмалли çĕр лаптăкне 300 гектара çити ÿстеретпĕр.

Выльăхсене валли çителĕклĕ таран апат пултăр тесе, ферма çумĕнче 56 гектар çинче пусуçаврăнăшĕ турăмăр.

Фермăсенче ĕçлекенсем выльăхсем валли витаминлă апат хатĕрлес ĕçе хăйсем пуçарса пычĕç. Вĕсем хăйсем кăна 100 центнер ытла арăмути, 102 центнер вĕлтрен, 150 центнер люцерна çăнăхĕ, 20 центнер вĕлтрен çăнăхĕ хатĕрленĕ.

Краскăпа сăрласа тунă диаграммăсем колхоз вăрçă вăхăтĕнче (1941—44 ç. ç.) епле ÿссе пынине тата обществăллă выльăхсем ĕрчетмелли плана ăнăçлăн тултарнине уççăн кăтартса параççĕ. Шултăра выльăхсен кĕтĕвĕ 18 пуçран 152 пуçа, сыснасем 65 пуçран 120 пуçа, сурăхсем 9 пуçран 231 пуçа çитнĕ. Пылхурчĕсем 64 вĕллерен 185 вĕллене çитрĕç. Юлашки çулсенче колхозниксен вăйĕпе сыснасемпе пăру витисем тата чăх-чĕп ферми турăмăр.

Колхозăн хуçалăхĕ пысăк. Анчах ĕç лашисем 47 пуç çеç-ха. Туртăм вăйĕ çителĕклĕ пултăр тесе, эпир кăçал пурĕ 550 вăкăра ĕçе вĕрентрĕмĕр. 1945 çулта ĕçлекен вăкăрсемпе ĕнесен йышне татах çавăн чухлĕ ÿстеретпĕр. Кăçал вăкăрсемпе кăна хатĕрлев пунктне 1.200 центнер тырă леçнĕ. Кĕлтесене вăхăтра капана хывса çитернĕ. Октябрĕн 21-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтертĕмĕр. Кĕрхи акана агротехника кăтартнă срокра вĕçленĕ. 370 гектар акас вырăнне 437 гектар акнă.

Колхозра учет ĕçне лайăх туса пыни ĕç дисциплинине çирĕплетме тата ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшрĕ. Колхозниксем фронтри пек ĕçлеççĕ, çавăнпа вĕсенчен нормăна ирттерсе тултарманни пĕрре те çук. Колхозăн хисеп хăмийĕ çинче чи лайăх стахановецсен ячĕсем 54 çынна çитеççĕ. Вĕсем хушшинче 70 çулхи Степан Калугин (6-мĕш бригада) колхозник та пур. Вăл, хăйĕн ватлăхне пăхмасăр, пĕр кун та ĕçрен юлман. Тырă акнă çĕрте те кулленхи нормăна 150—200 процента çити тултарса пынă. Кăçал хăй пĕччен вăл 380 ĕçкунĕ тунă. Паллă стахановецсенчен тепри вăл — Егор Кируш. Вăл та 67 çула çитнĕ ĕнтĕ. Çапах пĕччен 350 ĕçкунĕ ытла тунă. Фронтовиксен арăмĕсем М. Иванова, М. Гаврилова юлташсем тырă вырнă çĕрте çурлапа кунсерен 0,22-шер гектар вырчĕç. Колхоза шкул ачисемпе подростоксем те пысăк пулăшу параççĕ. Кĕраки тунă чухне Григорий Ильин, Илья Федотов 33-шер гектар сухаларĕç, Иван Михайлов хатĕрлев пунктне 127 центнер тырă леçнĕ.

Колхоз хуçалăхĕ çулсеренех ÿссе тĕрекленсе пырать. Çак вăрçă кунĕсенче колхоз правлени çуртне тата 150 çын вырнаçмалăх колхоз клубĕ туса лартрăмăр. Ку ĕçсене эпĕ хам пуçарса пытăм.

Агитаторсем хăйсен ĕçне кулленхи ĕçпе çыхăнтарса туса пырса ĕçре пулăшаççĕ. Вĕсем хаçат витрини, Совет Информаци Бюровĕн сводкисене пĕлтерсе пыма уйрăм хăма тунă. Колхозра «Эпир çĕнтеретпĕр» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать, пурĕ 13 номер тухнă, бригадăсенче 80 номер ытла боевой листок кăларнă.

Ялхуçалăх выставкине курма республикăри тата районри руководительсем, кÿршĕри колхозниксемпе колхозницăсем чылай пычĕç. Вĕсем çак выставкăна питех те кăмăлларĕç.

Пирĕн выставка вăрçă вăхăтĕнче колхоз аталанса пынине, колхоз стройĕн пурнăçне, колхоз хресченĕн вăрçă вăхăтĕнчи патриотизмне кăтартса парать.

И. ГРИГОРЬЕВ,
«Дружба» колхозăн председателĕ.

Вăрмар районĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—07, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

ИТ 04220 Типографи № 1, Управлени полиграфиздат при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. д. Тираж 16.000 экз.